# Шкул çинчен — кĕнекепе фильм

***Чăваш наци библиотекин «Мерчен» тĕпелĕнче ентешĕмĕр - Кушкă ялĕнче çуралса ӳснĕ Владимир Галошев ӳкернĕ «Кушкă шкулĕ 125 çулта» фильмам тата кĕнеке хаклавĕ иртнĕ. Мероприяти Чăваш наци конгресĕ пуçарса янă «Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем» проекта килĕшӳллĕн йĕркеленнĕ. Ăна автор 50 çул тултарнă тĕле халалланă.***

Мероприятие калем ăстисем, çыравçăсем, таврапĕлӳçĕсем, ӳнерçĕсем, общество деятелĕсем, В.Галошевăн ентешĕсемпе тăванĕсем хутшăннă. Вĕсен йышĕнче - Валентина Хлебникова академик, Чăваш Республикин культурен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Александр Яковлев, писатель тата журналист - Семен Элкер премийĕн лауреачĕ Петр Сидоров, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ӳнерçи Петр Пупин тата ыттисем те пулнă.

Владимир Петрович Галошев - Раççей журналисчĕсен, Чăваш ӳнерçисен пĕрлешĕвĕсен пайташĕ, чăваш халăх тĕнчине тĕпчекен нумай-нумай кĕнеке тата фильм авторе. Чăваш халăхĕн пурнăçĕпе тата кунçулĕпе çыхăннă çĕнĕрен те çĕнĕ проектсем пурнăçа кĕртессипе те тимлет вăл.

Хаклава пуçтарăннисем фильма тата кĕнекене пысăк хак панă.

**В.АРХИПОВА.**